Ухсай Яккăвĕпе малтанхи хут 1936 çулта курма тĕл килчĕ. Шупашкарти Хресчен çуртĕнче литература касĕ пулса иртрĕ. Унта чăваш писателĕсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине тухса хăйсен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кала-кала, произведенийĕсене вула-вула пачĕç.

Сцена çине çамрăк кăна, хурарах сăнлă, пысăках мар каччă тухса тăчĕ. Литература касне ертсе пыракан çын:

— Сирĕн умăрта — чăваш поэчĕ Ухсай Яккăвĕ, — терĕ. Ухсай хăйĕн сăввисене вулама пуçларĕ. Сăвă хыççăн сăвă янăрать. Халĕ эпĕ çав сăвăсен ячĕсене те аса илейместĕп, анчах та пĕр сăввинчи çак йĕркесем ĕмĕрлĕхех манăн асра юлчĕç:

...Малашлăх çыннисем — виç ывăл
Сикеççĕ висĕ сăпкара.
Пурте илемлĕ, пурте сывă,
Пурте Михайлов пек хура...

Ку вăл поэтăн 1935 çулта çырнă «Хыпар» ятлă сăвăри йĕркесем пулнă иккен. Çак çулах Ĕпхӳре поэтăн «Савăнăç кĕнеки» пичетленсе тухнă. Унта чун-чĕрене çĕклекен, ăшăтакан пысăк ăсталăхпа çырнă сăвă-юрă нумайăн мана савăнтарчĕ. Хам савăнăç çинчен эпĕ поэта иккĕмĕш хут курнă чух каласа патăм. Вăл ман çине пăртак куларах пăхса илчĕ те:

## Васлей Давыдов-Анатри,
## Чăваш халăх поэчĕ

# ПИРĔН УХСАЙ

### Асаилӳ

— «Савăнăç кĕнеки» манăн иккĕмĕш кĕнеке. Халĕ виççĕмĕш кĕнекене хатĕрлетĕп. Çырмалли, каламалли нумай. Ĕçлеме вăхăт çитменнипе аптăратăп, — терĕ.

Чăнах та, Ухсай поэзи хирĕнче ĕмĕрĕпех тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл вăрçăччен тăван литературăна «Роман романĕ», «Пуканесен бригади», «Туй», «Телей çулĕ», «Сăсар çĕлĕк», «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Кĕрхи октавăсем», «Кĕмĕл çĕрĕ» сăвăсемпе поэмăсем тата «Хура элчел», «Тутимер» ятлă сăвăллă драмăсем çырса парнелерĕ. Тӳрех каламалла, Ухсайăн пичетленсе тухнă кашни произведенийĕ пирĕншĕн яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса юлнă. Çакна та çырса хăварам: эпĕ Яков Гаврилович Ухсайпа паллашнă çул Шупашкарта Чăвашсен хаçат шкулĕнче вĕренеттĕмччĕ. Унта часчасах поэтсемпе писательсем пыратчĕç. Митта Васлейĕпе Уйăп Мишши, Ухсай Яккăвĕпе Александр Кăлкан писательсем пырса студентсемпе тĕлпулусем ирттеретчĕç. Çав вăхăтра Ухсай пирĕнпе пĕрле вĕренекен Васильева хушаматлă хĕрачапа паллашрĕ. Хĕрачи çав тери вăтанатчĕ. Ухсай ятне каласанах йăл кулса яратчĕ те урăх ним те шарламастчĕ. Ун чухне Ухсай хăй те хăюсăртарахчĕ. Вăл эпир вĕреннĕ, пурăннă Володарски урамĕнчи Пичет çурчĕ патне пыратчĕ те мана чĕнтерсе кăларатчĕ. Эпĕ вара вăл ыйтнине пурнăçлаттăм, поэт кăмăллакан хĕрачана чĕнсе тухаттăм.

— Урамра сана Якку кĕтет, — теттĕм... Çакна студентсем те сиснĕ-мĕн. Культ вăхăтĕнче çав тери йывăр кунсенче студентсен пухăвĕнче пирĕнпе пĕрле вĕренекен çамрăк поэт Пракка Сатур çинчен сӳтсе яврĕç, ăна Петĕр Хусанкайпа час-часах тĕл пулать тесе айăплама пăхрĕç. Сатур вара ним шухăшласа тăмасăрах: «Ун пек эпĕ çеç мар, Давыдов та Ухсайпа тĕл пулать, — тесе хучĕ. Эпĕ хăранипе çухалса кайрăм пулас, пĕр сăмах та чĕнеймерĕм. Пуху кĕрлесе кайрĕ. Юрать-ха Сатура та, мана та «тăшмансемпе» çыхăну тытакансен шутне кĕртсе айăплаймарĕç.



Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах Ухсай фронта тухса кайрĕ. Вăл фашизма хирĕç пăшалпа та, перопа та паттăррăн çапăçрĕ. Поэтăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă «Шăпчăк», «Шăллăм», «Вырăс хирĕнче», «Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне янă çыру» тата ытти произведенисем çырчĕ. Вĕсем совет çыннисен вăрçăри паттăрлăхĕпе хăюлăхне, вĕсем Тăван çĕршывăмăра чун-чĕререн юратнине кăтартса паракан произведенисем пулса юлчĕç.

Вăрçă хыççăн Яков Гаврилович Ухсай Шупашкара таврăнчĕ. Вăл Карл Маркс урамĕнчи пĕр çуртра пурăнатчĕ. Хваттерĕ пысăкчĕ. Унта кĕрсен куç умне музыка инструменчĕ, рояль, тухса тăратчĕ. Ун чухне эпир Яков Гавриловичпа унăн мăшăрĕ, чăвашсен паллă писательници Мария Дмитриевна Ухсай музыкăна чун-чĕререн юратакан çынсем иккенне туйса тăраттăмăр.

Ухсай çамрăк писательсене яланах ырă канашсем парса пулăшма тăрăшатчĕ. 1945 çулта вăл мана тĕл пулчĕ те:

— Çулусем иртсе пыраççĕ. Эпĕ юлташсемпе калаçса пăхрăм, сана хамăр писательсен Союзĕн членне илсен аван пулмалла, — терĕ. Ху мĕнле шутлатăн? Эпĕ Союза кĕме сана рекомендаци пама килĕшрĕм, — терĕ.

Паллах, эпĕ питех те савăнтăм. Ухсая ырă сăмахшăн чĕререн тав турăм. Чăнах та, вăл мана рекомендаци çырса пачĕ. Унта çапла каланă:

*«Давыдов, Василий Иванович, больше десяти лет работает в чувашской советской литературе, широко известен читателям как автор многих талантливых песен.*

*За последние годы Давыдов написал ряд интересных произведений. Его поэма «Чемень» получила премию на конкурсе на лучшие художественные произведения к 25-летию Чувашской АССР.*

*Считаю Давыдова достойным быть членом Союза советских писателей СССР.*

*30 декабря 1947 года.*
*Член ССП СССР Я. УХСАЙ».*